25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
СЕНТЯБРЬ
5
ШАМАТКУН
207 (6142) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

МТС-сен политотделĕсем тăратнă тăрăх, тракторсемпе тата комбайнсемпе ĕçлесе пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

39. Шăхасан МТС-ĕн **13-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ—**Иван Филиппов**). Вăл тракторпа ĕçлемелли ĕçсен планне иртерсе тултарнă, çемçе суха çине куç арса шутласан, 1.650 гектар вырăнне 1.834 гектар сухаланă тата 450 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

40. Шăхасан МТС-ĕнчи **тракторист Николай Яковлев**. Вăл хăй сменинче плана 180 процент тултарнă тата 1.581 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

41. Шăхасан МТС-ĕнчи **тракторист Павел Максимов.** Вăл хăй сменинче çулталăкри плана 174 процент тултарнă тата 330 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

42. Шăхасан МТС-ĕнчи **тракторист Георгий Алексеев.** Вăл плана 109 процент тултарнă тата 640 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

43. **Трактористка Варвара Васильева.** Вăл хăй сменинче 204 гектар ĕçленĕ тата 418 килограмм горючи перекетленĕ.

44. Елчĕк МТС-ĕнчи **комбайнер Алексей Краснов.** Вăл хăйĕн комбайнĕпе августăн 28-мĕш тĕлне 257 гектар çинчи тырра лайăх пахалăхпа вырса пуçтарнă.

45. Елчĕк МТС-ĕнчи **комбайнер Павел Васильевич Чернов.** Вăл комбайнпа 190 гектар çинчи тырра лайăх пахалăхпа вырса пуçтарнă.

46. Елчĕк МТС-ĕнчи **комбайнер Семен Карлин.** Вăл комбайнпа ĕçлесе 180 гектар çинчи тырра лайăх пахалăхпа вырса пуçтарнă.

47. Елчĕк МТС-ĕнчи **комбайнер Константин Молотов.** Вăл комбайнпа ĕçлесе 170 гектар çинчи тырра лайăх пахалăхпа вырса пуçтарнă.

48. Елчĕк МТС-ĕн **17-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ—**Аверкий Веков**). Вăл çулталăкри плана 170 процент тултарнă тата 1.283 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

49. Çĕмĕрле МТС-ĕнчи **комбайнер Иван Иванович Михайлов.** Вăл календарлă 20 кун хушшинче 300 гектар çинчи тырра вырса пуçтарнă, 126 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

50. Çĕмĕрле МТС-ĕнчи **комбайнер Семен Арсентьевич Чекменев.** Вăл календарлă 20 кун хушшинче 200 гектар çинчи тырра вырса пуçтарнă.

51. Çĕмĕрле МТС-ĕнчи **комбайнер Владимир Николаевич Мумыков.** Вăл календарлă 17 кун хушшинче 185 гектар çинчи тырра вырса пуçтарнă, 26 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

52. Çĕмĕрле МТС-ĕн **7-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ—**Иван Петрович Федотов**). Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 102,8 процент тултарнă, 852 килограмм краççин, 300 килограмм бензин тата 140 килограмм автол перекетлесе хăварнă.

53. Çĕмĕрле МТС-ĕнчи **тракторист Алексей Оськин.** Вăл У—2Г маркăллă тракторпа хăйĕн сменинче планра кăтартса панă 306 гектар вырăнне 657 гектар ĕçленĕ.

Хĕрлĕ Çар воинĕсем чĕнеççĕ

Юратнă тăван çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăх татах та ытларах çивĕчленчĕ. Миллионсен юнне ĕçсе урса кайнă тăшман, хăйĕн мĕнпур ирсĕр кĕтĕвĕсене пухса, çĕршыв талккишне шалтан шаларах шăтарса кĕме тапаçланать. Тăшман пирĕн моторсен юнне—Кавказ нефтьне тытса илме хапсăнать. Вăл Атăл çине шăтарса тухса, тăван çĕршывăн çак аслă шыв çулне татасшăн. Халăхсен юнĕпе вараланнă нимĕç вăрă-хурахĕн атти Донпа Кубань тăрăхĕнчи тулă хирĕсене таптать. Аслă çеçенхирти чечекленекен станицăсем вутра çунаççĕ.

Çĕнĕ юншăн антăхакан фашистла тискер-кайăка чарса лартмалла, унăн броньăланă пуçне çапса аркатмалла, ăна тăван çĕршыв талккишĕнчен сирсе ывăтмалла.

Хамăрăн аннемĕре—социализмлă тăван çĕршыва геройла хӳтĕлекен Хĕрлĕ Çарăн малти речĕсенче, Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур халăхсен представителĕсемпе пĕрле тăрса, чăваш халăхĕн ывăлĕсем те тăшмана хирĕç хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр паттăррăн çапăçаççĕ. Вĕсем çапăçу хирĕнче орденлă тăван республикăн ятне çӳлте тытаççĕ. Вăрçă çулăмĕнче тăшманшăн аçа-çиçĕм пулса тăракан паттăрсем çĕршерĕн ӳссе çитĕнчĕç. 150 çын ытла хăйсен паттăр ĕçĕсемшĕн Совет Союзĕн орденĕсене илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Совет çĕршывĕн кунçулĕ пирки ĕçе татса паракан хальхи хаяр çапăçусенче пирĕн тăван Хĕрлĕ Çара пĕтĕм халăх пулăшса тăрать. Фронтпа тыл, çарпа халăх хушшинчи çыхăну нихăçан та хальхин пек çирĕп пулман. Çак çыхăну вăл вăрçă çулăмĕнче татах та ытларах çирĕпленсе пырать.

Хаçатăн паянхи номерĕнче эпир Действующи Çарăн пĕр чаçĕнчи пирĕн земляксен—чăваш боецĕсен митингĕ çинчен калакан материалсене тата çав митинг орденлă Чăваш республикинчи мĕнпур ĕççыннисем патне янă çырăва пичетлетпĕр.

Митингра красноармеец-пулеметчик Аверкиев юлташ хăйĕн хĕрӳллĕ сăмахĕнче çапла каланă:

— Эпĕ аван пĕлсе тăратăп: нимĕç тискер-кайăкне эпĕ хам вĕлермесен, вăл мана вĕлерет. Юратнă тăван çĕршывăн кунçулĕ, пирĕн атте-аннемĕрсен, пирĕн арăмсемпе ачамăрсен тата савнă хĕрĕмĕрсен кунçулĕ пирĕн алăра тăрать. Пирĕн тăван çĕршыв, пирĕн тăвансемпе çемьесем халиччехи пекех ирĕкре пулччăр тесен, пирĕн тăшмана сывлăш çавăрма памасăр çапмалла, пĕр утăм та каялла чакмасăр çапăçмалла, вара хăвăртрах çĕнтеретпĕр. Çапла, нимĕç тискер-кайăкне эпир вĕлермесен, вăл пире вĕлерет. Çакна паян фронтри кашни боец ăнланать. Хĕрлĕ Çар воинĕсем нимĕç оккупанчĕсене ăçта тĕл пулнă, унта—кашни утăмра, кашни йывăç патĕнче, кашни лакăмра, кашни тĕм хыçĕнче вĕлерсе пыраççĕ. Пирĕн фронтри землякСем хăйсен çырăвĕнче Васильевпа Волков автоматчиксен, бронебойщик Григорьевăн, Шатров юлташ военком пулса тăракан батарейăн, Ивановпа Машин саперсен, политотдел начальникĕн Мистрюков комиссарăн тата ыттисен паттăр ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ.

Мĕнпур боецсен шухăшĕсене пĕтĕçтерсе отделени командирĕ И. Мурзин юлташ митингра:

— Хамăрăн герой-землякăн В. И. Чапаевăн ятне ямăпăр—тăшмана Чапаев пек çапăпăр, тенĕ.

Паттăр землякСем фронтра тăшмана хирĕç Чапаев пек çапăçма тупа туса, хăйсен çырăвĕнче Чăваш республикинчи мĕнпур ĕççыннисене фронта татах та вăйлăнрах пулăшса тăма, кăçалхи вăйлă тырпула вăхăтра та пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме чĕнеççĕ. Фронтри боецсем хăйсен тăван республики мĕнле ĕçленине сăнасах тăраççĕ, вĕсем кашни çĕнĕ çитĕнӳшĕн савăнаççĕ, çав çитĕнӳсемпе хавхаланаççĕ.

Аслă тăван çĕршыв, пирĕн чечекленекен ялсемпе хуласем, пирĕн тăвансемпе çемьесем халиччехи пекех ирĕкре пулччăр тесен, хамăрăн фронтри паттăрсем пирĕн тылри ĕçпе татах та ытларах хавхаланччăр тесен, пирĕн рабочисемпе колхозниксем фронтшăн ывăнма пĕлмесĕр, хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр ĕçлеме тивĕçлĕ. Хамăрăн фронтри геройсен ятне тылра ӳкермелле мар.

Нумаях пулмасть Хĕвеланăç тата Калинин фрончĕсенче пирĕн войскăсем тунă çĕнтерӳсем çинчен пĕлтерни ĕççыннисене çĕнĕ вăй-хăват кӳчĕ. Çапла, Йĕпреç районĕнчи Кировски ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем, Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕпе хавхаланса, кĕрхи тырăсене планран иртерсе 15 гектар акса хăварнă. Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывшăн кашни ытлашши гектар мĕн пек паха пулса тăни каламасăрах паллă.

Халĕ акă сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх пуçланнă. Çак вунăкунлăхра пирĕн тырпул пухса кĕртес тĕп ĕçсене вĕçлемелле. Уйра пĕр кĕлте те, пĕр пучах та хăвармалла мар. Пĕтĕмпех турттарса капана хывмалла. Авăна кунĕн-çĕрĕн çапмалла. Пĕр молотилка та пушă ан лартăр. Комбайнсене, тырă вырса пĕтерсен, тӳрех авăн çапнă çĕре куçармалла. Государствăна тырпул парса татмалла. Натуроплата тыррине васкасах парас пулать.

Кашни çыннăн хăйĕн вырăнĕнче икĕ вичĕ çыншăн ĕçлемелле. Пĕр çын та, пĕр сехетлĕхе те пушă ларма тивĕçлĕ мар. Пирĕн хамăрăн тылри хĕрӳллĕ ĕçпе фронта çапла куллен пулăшса тăмалла. Çакă вăл хамăрăн çапăçу хирĕнчи земляксем чĕнсе калани çине, пирĕн çулпуç Сталин юлташ чĕнсе калани çине чыслăн ответлени пулать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Сталинградран** çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, çавăн пекех тата **Новороссийскран** çурçĕр-хĕвеланăçнерехре хаярран çапăçнă.

Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сентябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 15 танкĕпе бронемашинине çити, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 6 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, пĕрпайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре вăйлă çапăçусем пынă. Гитлеровецсем пирĕн Н-ски соединение атакăланă. Противникăн наступлени тăвакан танкĕсемпе пехотине совет артиллерийĕпе бронебойщикĕсем вăйлăн персе кĕтсе илнĕ. Çапăçу хирĕнче çĕмĕрĕлнĕ тата çунса кайнă 9 танк тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 400 яхăн вилли выртса юлнă. Тепĕр икĕ сехетрен противник пирĕн позицисене çĕнĕрен атакăланă та пирĕн чаçсене каялла чакарнă. Тепĕр участокра тăшман, атака тума хатĕрленсе, пĕр айлăмра танксемпе пехота нумай пухса тăратнă. Пирĕн чаçсем çавна маларах сиснĕ. Тăшманăн пухса тăратнă вăйĕсем çине пирĕн артиллери темиçе хутчен сасартăк персе нимĕçсене пысăк çухатусем тӳстернĕ.

Клетская районĕнче пирĕн чаçсем противникăн темиçе контратакине сирсе янă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн пирĕн оборона ăшне шăтарса кĕнĕ танкĕсемпе пехотине хирĕç кунĕпех хĕрӳллĕн çапăçнă. Пĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем тăшман танксемпе тунă темиçе атакăна сирсе янă. Пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ, танкне çунтарса янă.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем оборонăллă çапăçусем туса пынă. Халăх пурăнакан П. пункчĕ патĕнче сывлăшран бомбăсем пăрахса тата артиллерирен персе тăнă хыççăн, противникăн танкĕсемпе мотопехоти пирĕн оборонăна савăлланса кĕме пултарнă. Вăйлăн çапăçнă хыççăн пирĕн часть çĕнĕ позицисем патне чакнă. Ытти участоксенче противникăн пур атакисене те сирсе янă, противника пысăк çухатусем тӳстернĕ. Нимĕçсен 11 танкне, 9 орудине, 25 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Моздок районĕнче шыв урлă хывнă каçăсемшĕн хаярран çапăçнă.

Пирĕн истребительсем сывлăшра нимĕçсен «Мессершмитт» йышши 12 самолетне тĕл пулнă. Пуçланса кайнă çапăçура совет летчикĕсем нимĕçсен 10 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Нимĕçсен 56-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 234-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак Вальтер Герлах çапла каласа панă: «Кăçалхи июль уйăхĕнче эпĕ Карачево хулинче тыткăнри çынсем валли тунă лагерьте пултăм. Эпир унта тыткăна лекнĕ çынсене леçсе хăвартăмăр. Вăл лагере çырмара тунă. Йĕплĕ пралук карса çавăрнă вырăнта тыткăна лекнĕ вырăс красноармеецĕсемпе граждансем, çав шутрах хĕрарăмсем те, темиçе çĕр çын пурăнаççĕ. Çавăнта хупнă çынсем çулсем тăваççĕ. Вĕсене çиме мĕн панине эпĕ пĕлместĕп, анчах та вĕсем аран-аран çеç уткалаççĕ». Малалла çав тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕ нимĕçсем тыткăнри красноармеецсене пере-пере вĕлернисем çинчен каласа панă. «Нумаях пулмасть пирĕн полк 20 вырăса тыткăна илчĕ. Допрос тунă чухне вĕсене хĕнесе пĕтерчĕç те унтан вара персе вĕлерчĕç. Пирĕн полкăн командирĕ пулнă Кизик полковник пĕррехинче тыткăна лекнĕ çынсене допрос тунă. Унтан вăл, допросра панă ответсем ăна килĕшмен пирки, тыткăна лекнĕ 6 красноармееца персе вĕлерчĕ».

* * *

Ворошиловград облаçĕнчи Дарьевка ялĕнче нимĕçсен карательнăй отрячĕ 13 çулхи ачана—Коля Никифоренкăна тытса чарнă. Нимĕç офицерĕ ăна партизансем хăш вырăнта тăнине кăтартма хушнă. Ача эпĕ нимĕн те пĕлместĕп тесе ответленĕ. Гитлеровецсем çав ачана тискеррĕн хĕнесе тăкнă та унăн пӳрнисене хуçнă, хăлхисене касса татнă. Коля Никифоренкăран пĕр сăмах та илтеймен пирки фашистла тискер кайăксем ăна персе пăрахнă.

Сентябрĕн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Сталинградран** çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, çавăн пекех тата **Новороссийскран** çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра хаярран çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă. Н-ски чаçăн участокĕнче нимĕçсен 2 танкне, 3 бронемашинине тата боеприпассем тиенĕ 8 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 200 виллине çити выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн пехота подразделенийĕсем танксем пулăшнипе противник вырнаçнă вырăна çĕмĕрсе кĕнĕ. Хаяр тытăçура совет боецĕсем гитлеровецсен 2 ротине вĕлерсе пĕтернĕ, 4 танк, 9 противотанковăй оруди пĕтерсе тăкнă тата 8 пулеметпа 5 миномет тытса илнĕ.

Клетская районĕнче пирĕн чаçсем халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ тата противникăн темиçе контратакине сирсе янă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç хĕрӳллĕн çапăçнă. Пĕр ансăр участокра пысăк вăйсем пухса тăратса, противник пирĕн позицисене тăтăшах атакăлать. Питех те пысăк çухатусем тӳссе, гитлеровецсем кăштах малалла куçма пултарнă. Ытти участоксенче противникăн атакисене сире-сире янă, противника пысăк çухатусем тӳстернĕ.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем Н-ски соединенин позицийĕсене темиçе хутчен атакăланă. Пирĕн боецсем тăшманăн йышлăрах вăйĕсем хĕснине чăтса иртернĕ, гитлеровецсен атакисене сирсе янă. Çапăçура 6 танк пĕтерсе тăкнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна ытла вĕлернĕ. Тепĕр участокра çапăçусем пĕр высоташăн пынă. Тăшманăн йышлăрах вăйĕсем хĕснипе пирĕн часть, çав высотана хăварса, оборонăн çĕнĕ рубежне йышăннă.

Моздок районĕнче пирĕн войскăсем противникăн шыв рубежĕ урлă каçнă группине пĕтерессшĕн çапăçнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пирĕн боецсем халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ, 2 оруди, 3 миномет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски подразделени 150 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 183-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 330-мĕш полкран хăйĕн ирĕкĕпе тыткăна парăннă салтак Артур М. çапла каласа панă: «Нумаях пулмасть пирĕн ротăри взводсен командирĕсем салтаксене çапла каларĕç: çитес хĕл валли блиндажсем тумалла, терĕç. Российăра иртнĕ хĕле чăтса ирттернĕ салтаксем çав приказ пирки хытă ӳпкелешеççĕ. Офицерсем пире çак юлашки вăхăтченех вĕт-ха: Германи çарĕ кăнтăрта тунă çитĕнӳсем часах вăрçа вĕçлĕç, тесе каласа тăчĕç. Салтаксем çитес хĕллехи кампани çинчен питĕ хăраса шухăшлаççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ **Германия** Хĕвелтухăçĕнчи фронтра иккĕмĕш хĕле чăтса иртерес çук тесе шутлаççĕ».

* * *

Вĕлернĕ нимĕç лейтенанчĕ Гейнц Шульц çумĕнче Брентауран (Данциг çывăхĕнчен) унăн пĕлĕшĕ Гертруда çырнă çырăва тупнă. Çав çырура Гертруда çапла çырать: «Ĕнер ман патăмра Шахауран килнĕ Эльза Вернер пулчĕ. Вĕсем патĕнче те питĕ хăрушă пулнă. Хĕрлисем йывăр бомбăсем пăрахнă. Верфьсем нумайччен çуннă. Шахаура çĕмĕрĕлмен пĕр кантăк та юлман. Эльза унта таврăнма хăрать. Çынсем ăçта та пулин каймалла тесе шутлаççĕ, анчах та ăçта-ха? Эльза мана Штраубинга чĕнет. Канаш пар-ха мана, мĕн тăвас манăн—каяс-и? Вырăссем е томмисем унта та çитме пултараççĕ вĕт. Эпир йăлтах аптăраса çитрĕмĕр...»

* * *

Калинин облаçĕнчи халĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Большое Находово ялĕнчи çынсем Михаил Шведов, Татьяна Громова тата ыттисем те совет çыннисем нимĕçсен пусмăрĕ айĕнче мĕнле пурăнни çинчен каласа панă: «Пирĕн ялта гитлеровецсем 10 уйăх ытла хуçаланса пурăнчĕç. Вĕсем ялти çынсенчен пĕтĕм тырра, çĕрулмине, выльăх-чĕрлĕхе тата кайăк-кĕшĕке туртса илчĕç. Питĕ хăрушă выçлăх килсе çитрĕ. Нумай хресченсем выçă вилĕмпе вилчĕç. Çамрăк ачасем вилнĕ чухне чĕре çурăлас пек йĕратчĕ. Вуншар колхознике гитлерла çынвĕлеренсем асаплантарса е персе вĕлерчĕç. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чух нимĕç çаратуçисем пирĕн яла пĕтĕмпе пĕтерсе хучĕç. Вĕсем колхозниксен 90 пӳртне çунтарса ячĕç».

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх

Тырă вырас, кĕраки тăвас ĕçсене çак кунсенчех вĕçлетпĕр

ВĂРМАР, сентябрĕн 4-мĕш. (**Телефонпа**). Ĕнерхи кун тĕлне районри 55 колхозран 21-шĕ ырашпа кĕрхи тулăн кĕлтисене капана хывас ĕçе вĕçленĕ. Вырса пуçтарнă 22.913 гектар тырăран 10.820 гектар çинчи кĕлтесене, урăхла каласан 51 процентне, капана хывнă. Кĕлтесене капана хывассипе пĕрлех авăн çапасси те хĕрӳллĕн пулса пырать. Пурĕ 9.112 гектар çинчи тырăсене çапса пуçтарнă.

Çуртыррисене вырас тĕлĕшпе Кĕтеснерти «15-й партсъезд», Пысăк Енкасси, Мăнçырма, Хуруй ялсовечĕсенчи колхозсем кая юлчĕç. Вĕсенче 30—40 гектар çинчи çуртыррисене вырман. Фронтовой вунăкунлăх пуçлансан, эпир çак колхозсене тата вăйлăнрах пулăшма тытăнтăмăр. Çуртыррисене вырас ĕçсене вĕçлеме Хуруй колхозне «Труд» колхозран 2 жнейка ятăмăр. Сентябрĕн 6-мĕшĕнче çуртыррисене вырас ĕçе пĕтĕмĕшпех вĕçлетпĕр.

Районри колхозсенчен чылайĕшĕ кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç. Тула облаçĕнчи «Заря» ялхуçалăх артелĕн чĕнĕвĕ çине ответлесе, Кив Вăрмарти «Большевик» колхоз 60 гектар, Кив Мăнтăрти «Исварин», «Красная кубня», «Красная звезда», Киров ячĕпе тăракан колхозсем 40-шер гектар çине планран ирттерсе ыраш акса хăварчĕç. Кĕрхи тырăсем акмалли çĕрĕн лаптăкне Текешри «Большевик» колхоз 60 гектар, Кавалти «Маяк» колхоз 58 гектар чухлĕ пысăклатрĕç.

Чылай колхозсенче кĕракинчен пушаннă лашасемпе кĕрхи çĕртме тăваççĕ. Ку ĕç уйрăмах «Атнаш», «Париж коммуни», Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче организованно пырать. «Атнаш» колхоз пĕрремĕш пилĕккунлăхра кĕрхи çĕртме тумалли графика 200 процент тултарчĕ.

Г. КРЮЧКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Авăн çапас ĕçе вăйлатмалла

ЕЛЧĔК, сентябрĕн 4-мĕш. (**Телефонпа**). Районри колхозсем çывăх кунсенчех тырă вырса пĕтереççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне район акса хăварнă мĕнпур тырăсен 91 процентне вырса пуçтарнă. Анчах кĕлтесене капана хывас, авăн çапас ĕçсем питех те юлса пыраççĕ-ха. Сентябрĕн 3-мĕш тĕлне район вырса пуçтарнă тырăсене çуррине яхăн çеç капана хывнă, 24 процентне çапса кĕртнĕ.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене вĕçлес тĕлĕшпе пуçланнă фронтовой вунăкунлăха хутшăнса, эпир хамăр умма кĕлтесене капана хывас, авăн çапас тĕлĕшпе юлса пырассине пĕтерес задача лартрăмăр. «Комбайн», Ленин ячĕпе тăракан колхозсем çак кунсенчех мĕнпур кĕлтесене капана хывса пĕтереççĕ. «Комбайн» колхоз 695 гектар çинчи кĕлтесен 70 процентне алă вĕççĕн çĕклесе капана хывнă. Çапла тунипе колхоз ку ĕçрен пушă лашасемпе государствăна тырă панă çĕрте усă курать.

Районăн авăн çапас ĕçе хăвăртлатма пур майсем те пур. Анчах халĕ ку ĕçре МТС-ăн 18 молотилкинчен 11-шĕ çеç, колхозсенчи 70 молотилкăран 21-шĕ çеç ĕçлеççĕ-ха, вĕсене те талăкра 12—14 сехетрен ытла мар ĕçлеттереççĕ. Çавăнпа ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕк. Тăпачăпа çапакансем те ĕç нормине тултармаççĕ.

Вунăкунлăхра çак çитменлĕхсене пĕтерсе, авăн çапас ĕçе вăйлататпăр.

Н. ВОЛКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ

ИШЛЕЙ, сентябрĕн 4-мĕш. (**Телефонпа**). Киров тата Жданов ячĕпе тăракан колхозсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене хăвăртрах вĕçлес тĕлĕшпе пуçланнă фронтовой вунăкунлăхра пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ.

Киров ячĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ И. Егоров юлташ) уборка ĕçĕсене мĕнпур колхозниксене, пĕр çын юлмиччен, явăçтарнă. Ĕç нормине тултармасăр пĕр колхозник те хиртен таврăнмасть. Колхоз паян кĕрхи тырăсене капана хывса пĕтерчĕ, çуртырри кĕлтисене капана хывма тытăнчĕ.

Колхоз авăн çапас, государствăна тырă парас тата МТС ĕçĕшĕн натуроплата тӳлес ĕçсене те манса хăвармасть. Паянхи кун 20 гектар çинчи тырăсене çапса пуçтарнă. Государствăна тырă парса татнă, 150 центнер натуроплата панă.

Фронтовой вунăкунлăха хутшăннă хыççăн, Жданов ячĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ И. Осипов юлташ) кĕлте турттарас ĕçе вăйлатрĕ. В. Иванов, Н. Михайлов, А. Матвеев тата А. Михайлова юлташсем кулленех нормăпа 9-шар лав кĕлте турттарас вырăнне 15—16-шар лав турттараççĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес ĕçре колхозри иккĕмĕш бригада (бригадирĕ С. Григорьев юлташ) малта пырать.

З. МИТРОФАНОВА.

Ялхуçалăх ĕçĕсенче черетлĕх пулмалла мар

КАЛИНИНО. (**Телефонпа**). Шĕнерти «Первое мая» колхоз (колхоз председателĕ В. Иванов юлташ) уборкăри пур ĕçсене те пĕр вăхăтрах ăнăçлăн туса пырать. Сентябрĕн 3-мĕш тĕлне вăл 134 гектар çинчи кĕлтесене турттарса капана хывнă, 80 гектар çинчи тырра çапнă, кĕрхи тырăсене акса пĕтернĕ. Тула облаçĕнчи «Заря» ялхуçалăх артелĕн пуçарăвĕпе колхоз планран ирттерсе 20 гектар çине ыраш акса хăварнă. Çавăн пекех Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз та вырса пуçтарнă 274 гектартан 186 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă, 154 гектар тыррине çапнă.

«Красноармеец» колхозра молотилкăна двигатель вăйĕпе ĕçлеттерсе авăн çапаççĕ. Ку ĕçре М. Сергеев юлташ бригади лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Унăн бригадинчи колхозниксем кулленех 2—2,5 норма тултарса ĕçлеççĕ. Молотилкăна талăкра 20 сехетрен кая мар ĕçлеттереççĕ. Çак колхозра тăпачăпа авăн çапакансем П. Софронова, Е. Семенова юлташсем нормăпа 1,5 центнер тырă çапас вырăнне кулленех 3 центнер таран çапаççĕ.

Районри пур колхозсен те çак колхозсен примерĕпе ĕçлесе, ялхуçалăхĕнчи ĕçсене пурне те пĕр харăс туса пымалла. Ялхуçалăх ĕçĕсенче черетлĕх пулмалла мар.

Г. МАТВЕЕВ.

Вунăкунлăха хутшăнса колхозсем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ

КАНАШ, сентябрĕн 4-мĕш. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене вĕçлес тĕлĕшпе пыракан фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх районри колхозсенче ăнăçлăн пырать. Кĕрхи тырăсем акас тĕлĕшпе государство панă плана тултарнă колхозсем халĕ планран ирттерсе акаççĕ. Анаткас Татмăшри «Париж Коммуни», Аксаринăри Крупская ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тырăсене планран ирттерсе 30-шар гектар, Ямаккассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз — 55 гектар, «Малалла» колхоз 48 гектар акрĕç. «Малалла» колхоз (председателĕ Кукушкина юлташ) кĕраки планне 220 процент тултарчĕ. Район планран ирттерсе кĕртыррисем пурĕ 500 гектар çине акса хăварать.

Районри пур колхозсем те сентябрĕн 5-мĕшĕнче çуртыррисене вырса пĕтереççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне ку ĕç районри 48 колхозран 4-шĕнче — «Красный путиловец», «Ударник», М. Горький тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче вĕçленмен. Фронтовой вунăкунлăха хутшăннă хыççăн юнашар колхозсен чăнĕсем вĕсене пулăшма тытăнчĕç. «Красный путиловец» колхозра «Искра», «Красный Октябрь», Крупская тата Доронин ячĕпе тăракан колхозсенчен пынă 5 жнейка ĕçлет.

Уборка ĕçĕсене уйрăмах Аксаринăри Крупская ячĕпе тăракан колхоз ăнăçлăн вĕçлерĕ. Колхоз председателĕ коммунист И. Мартынов юлташ колхозри ĕçе тĕрĕс организацилерĕ. Агитаторсемпе вулавçăсем хăйсен витĕмлĕ сăмахĕсемпе хирте ĕçлекен колхозниксене кашни кун çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарса пычĕç. 2-мĕш бригадăри колхозницăсем А. Семенова, Н. Никитина, А. Ефремова, Д. Иванова юлташсем кĕреплеллĕ çавапа куллен 0,33 гектар тыррине çулса пуçтарас вырăнне 0,70—0,75 гектар çинчи тырăсене çулчĕç. Çурлапа выракансем М. Ильина, А. Петрова, А. Алексеева тата Д. Архипова кулленхи ĕç нормине 150—200 процент пурнăçласа пычĕç.

Колхоз учетчикĕ комсомолец Алексей Шавгаев пионерсемпе шкул ачисене пучах пухас ĕçе организациленĕ. Августăн 23-мĕшĕнче 26-мĕшĕнче 50—60 ача пурĕ 55 гектар çинчи пучахсене алăпа тата кĕреплесемпе пухса илнĕ. 2-мĕш класра вĕренекен Н. Петров, 5-мĕш класран вĕренсе тухнă Н. Шавгаев, Н. Дунаев 15-шер килограмм пучах пухнă.

Колхоз фронтовой вунăкунлăхра кĕлтесене капана хывса пĕтерет.

Тăшмана хамăрăн земляк Чапаев пек аркатса пырăр!

Чăваш красноармеецĕсен, командирĕсен тата политработникĕсен митингĕ

Нумай пулмасть Н-ски чăсри чăваш красноармеецĕсен, командирĕсен тата политработникĕсен митингĕ иртрĕ. Çав митинга чи малтан красноармеец-пулеметчик Аверкиев юлташ хĕрÿллĕ сăмах тухса калаçнă.

— Паян эпир, хаклă халăхăм ывăлĕсем, митинга пуçтарăнтăмăр, [illegible]

[illegible]

Отделени командирĕ И. Мурзин юлташ сăмах илет: [illegible]

[illegible] кăларма пултаракан вăй çине пĕхнă пек пăхаççĕ. Эпир шанăçа тÿрре кăларма тивĕç, эпир ăна тума пултаратпăр. Эпир çĕнтермелле.

Манăн отделени юлашки вăхăтра Б., С. Н. тата В. [illegible]

[illegible]

Политрук заместителĕ М. Огородников юлташ [illegible]

— Тăван çĕршыв, эпир санăн [illegible]

Унтан политрук В. Ржанов юлташ сăмах калать:

— Вăрçă пирĕн [illegible]

[illegible] хирĕç кĕрешекен Григорьев, сапер-наводчик [illegible] Машина Иванов, артиллерист Шатров [illegible]

[illegible] кĕрлехне ан тусчĕр тесен, пирĕн Совет çĕрĕн кашни метрне юлашки юн тумламĕ юлмиччен сыхламалла.

Митинг Чăваш республикинчи ĕç çыннисем патне çыру яма йышăннă.

Пĕр чаçри чăваш красноармеецĕсем митингра йышăннă çыру

ХАКЛĂ ЮЛТАШСЕМ-ЗЕМЛЯКСЕМ!

Урса кайнă тăшман хăй питĕ пысăк çухатусем тÿснине пăхмасăрах малалла тапаçланать, пирĕн хуласемпе ялсене çунтарать, совет çыннисене пинпиншерĕн вĕлерет, туралăх сăнчăрпе сăнчăрлать. Фашистла вăрă-хурахсен йыткĕтĕвĕ Атăл тăрăхĕнчи ырă çĕрсене туртса илесшĕн, тăван Атăла вараласшăн, пирĕн савнă ачамăрсене, арăмсене, атте-аннемĕрсене хĕн-хурлăхăн хаяр аллине кĕртсе ÿкересшĕн.

Тăван çĕршыв пире — Хĕрлĕ Çар воинĕсене — гитлерла тискер кайăка чарса лартма, вăрă-хурахăн вăрăм аллисене ĕмĕрлĕхех татса ывăтма хушать.

Çак йывăр сехетре, эпир — Советлă Чăваш республикин ывăлĕсем — Тăван çĕршыв кун-çулĕшĕн пирĕн çинче пысăк ответлăх пулнине туйса тăратпăр. Çавăнпа та хамăр земляка — Василий Иванович Чапаевăн чыслă та çутă сăнарне асра тытса, Сирĕн умăрта, хаклă землясем, Тăван çĕршыв приказне пурнăçа кĕртме тупа тăватпăр: кирек мĕн пулсан та ирсĕр тăшмана чарса лартăпăр, ăна пĕтĕмпех аркатса тăкăпăр. Çав ирсĕр фашистсене алăсем ĕçлеме, юн çаврăнма чаранниччен пĕтерсе пыма пулатпăр. Вилĕпĕр, анчах хамăр рубежран пĕр утăм та каялла чакас çук! — çакă пирĕн боевой лозунг пулса тăрать. Совет çĕршывĕшĕн Чапаев пек çапăçма сăмах паратпăр.

Хаклă земляксем! Эпир тулли кăмăлпа Сире çакна пĕлтеретпĕр: пирĕн республикăран килнĕ воинсенчен нумайĕшĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешсе пыраççĕ. Вĕсене кунта чысласçĕ, вĕсем çинчен юратса калаçаççĕ. Бронебойщик Григорьев юлташ танксене хирĕç печелли пăшалпа нумаях пулмасть тăшманăн пĕр танкне пĕтерсе тăкрĕ. Шатров юлташ военком пулса ĕçлекен батарея темиçе çĕр фашиста «леш тĕнчене» ăсатрĕ. Тăшман танкĕсене хирĕç ăста та паттăррăн кĕрешме пултарнине Иванов тата Машин саперсем уçăмлăн кăтартса пачĕç. Эпир пирĕн землякăн политотдел начальникĕ Мистрюков юлташăн пархатарлă ĕçĕсемпе тивĕçлипе мухтанатпăр. Вăл пире нимĕç оккупанчĕсене аркатма куллен вĕрентсе пырать.

Пулас çапăçусене хатĕрленнĕ май, Тăван çĕршыв пире тата та çирĕпрех, пĕтĕçÿллĕрех пулма, хăватлăн çапăçма хушнине эпир лайăх ăнланатпăр. Тăван çĕршыв хушнине пурнăçлама мĕн кирлине пурне те тăвăпăр. Ылханлă, шăршлă нимĕçсене пирĕн çĕр çинче вĕсен тĕсĕ юлмиччен пĕтерсе пырăпăр! Çĕлен калтасене вĕлерĕпĕр!

Хаклă юлташсем — Чăваш республикинчи тăван колхозниксемпе колхозницăсем, рабочисемпе работницăсем, интеллигентсем! Пирĕн аттесемпе аннесем, аппа-йăмăксемпе шăлнăмсем! Эпир Сирĕн кашни çĕнĕ çĕнтерÿшĕн савăнатпăр. Эсир фронта пулăшас тĕлĕшпе паттăррăн ĕçлесе пыни пире çине тăрса çапăçма, тăшмана хăвăртрах аркатса тăкма хавхалантарать. Эпир ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ И. Чарыков юлташ «Правда» хаçатра çырса кăларнă статьяна пысăк хавасланупа вуласа тухрăмăр: пуян тырпула пуçтарса кĕртме пурте пĕр харăс тухнăшăн, государство умĕнчи обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пынăшăн Сире красноармеецла пысăк спасибă. Фронта чыслăн пулăшса пынăшăн Сире тав тăватпăр. Производствăн пур участокĕсенче те тата пухăçлăрах, тата пахарах ĕçлессишĕн кĕрешĕр! Тырпула вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ хăвăртлăхпа тата тăкаксăр пуçтарса кĕртĕр.

Фронт тата тыл пĕр пулса ĕçленипе эпир тăшмана çĕнтеретпĕр!

Старши лейтенант ЧУВАХИН, красноармеец-пулеметчик А. АВЕРКИЕВ, кĕçĕн сержант Н. АРИСТАРХОВ, лейтенант КОРОТКОВ, кĕçĕн сержант Ф. МОНАХОВ, сержант Я. ТЕРЕНТЬЕВ, лейтенант ОРЛОВ, отделени командирĕ И. МУРЗИН, красноармеец-пулеметчик Л. ГРИГОРЬЕВ, красноармеец-минометчик Г. САВЕЛЬЕВ, красноармеец-бронебойщиксем Е. АНДРЕЕВ, И. ИГНАТЬЕВ, П. КЛЕМЕНТЬЕВ, сапернăй взвод командирĕ Е. ИВАНОВ, артиллерист-наводчик Г. ПЕТРОВ, сержант И. ПЕТРОВ, красноармеецсем И. ЕГОРОВ, К. ЧЕРНОВ, А. ВОЛКОВ, М. АДЮКИН, Г. РАЗУМОВ, П. ЧЕРНОВ, И. ФЕДОРОВ, Ф. КУДРЯШОВ, Г. ВАСИЛЬЕВ, В. СМИРНОВ, О. НИКОЛЕВ, кĕçĕн политрук К. СКВОРЦОВ, красноармеецсем Г. ЛАЗАРЕВ, А. АЛЕКСАНДРОВ, С. ПРОХОРОВ, И. ИВАНОВ, Е. ИВАНОВ, Г. ВОРОНЦОВ, политрук заместителĕ М. ОГОРОДНИКОВ, политрук В. РЖАНОВ, красноармеецсем Н. МОСКОВСКИЙ, Н. ЗАХАРОВ, А. БЕЛКОВ т. ыт. те (мĕн пурĕ 256 çын алă пуснă).

Вăрлăхлăх хăварнă клевера вăхăтра çулса пухар

Курăк вăрлăхĕсем ялхуçалăхĕшĕн те, оборона ĕçĕнче те питĕ кирлĕ. Акса тăвакан курăксенчен паллăрах вырăн йышăнаканни, паллах ĕнтĕ, клевер пулса тăрать. Вăл выльăх-чĕрлĕхе валли чи лайăх апат парать, çав вăхăтрах вăл тырпула е çимĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшать. Ахалрен мар ĕнтĕ ăна «симĕс ылттăн» тесе ят панă. Анчах клевер вăрри çитменнипе час-часах клевер акас вырăнсем акăнмасăр юлни, план пурнăçа кĕраймесĕр юлни пулкалать. Çапла пулни ялхуçалăхпе нумай сиен кÿрет; унсăр пуçне, колхозсем государствăна та клевер вăррине парса татаймаççĕ.

Кăçал ĕнтĕ вăрлăхлăх клевера колхозсем çителĕклĕ хăварнă, вăрă тухăçлă пулас шанчăк пур. Ăна вăхăтра çулса о вырса пухса çапни çеç кирлĕ. Вăрлăхлăх хăварнă клевера вăхăтра çулса пухни питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать, мĕншĕн тесен—вăхăтра пухманни [illegible] вăрлăхлăх хăварнă участоксене вăхăтра пухмарĕç. Вара клевер, люцерна вăррисем ытлашши пулса кайнă пирки çилпе силленсе анасем çинех тăкăнса юлчĕç (кăçал вĕсем çуртырри ăшĕнче питĕ йышлăн шăтса ÿсрĕç), çитменнине тата çулса пăрахнă вăрлăхлăхсем те пухăнмасăрах çумăр-юр айне пулса пĕткелерĕç. Çав вăхăтрах, клевера хăй вăхăтĕнче пухса çапнă колхозсем вăрлăх хăйсем валли те турĕç, государствăна та пачĕç. Клевер пек курăк вăррисем хальхи вăхăтра тĕштырă вăррисенчен те пахарах пулса тăраççĕ. Çавăнпа вĕсене пĕр тăкаксăр пухса илни кирлĕ.

Тăкак ан пултăр тесен, клевер вăррин тухăçĕ нумайрах пултăр тесен, вăрлăх валли хăварнă клевер пуçĕсем 75—80 процент таран пулса хăмăрлансанах çулса пухас пулать те, хăвăртрах типĕтсе çапса тирпейлес пулать. Ăна тума вăхăт çитрĕ ĕнтĕ, çавăнпа [illegible] ратпăр. Клевере çапса вăррисене шĕкĕлчеме мĕнпур молотилкăсене мобилизацилес пулать, вĕсемпе кирлĕ таран усă курас пулать.

Вăрлăхлăх анасем çийĕнче хăшпĕр çĕрте халĕ те тĕрлĕ çумкурăкĕсем нумай: эрĕм, пиçенсем, мăянсем, кăшкарутисем тата ыттисем те. Вĕсене вăрлăха çуличчен, е çулнă чух иртсе пăрахас пулать, ахаллĕн вĕсен вăррисем клевер вăррисемпе хутшăнса, унăн пахалăхне чакарма пултараççĕ.

Çапса шĕкĕлченĕ вăрра кускут тата ытти машинăсемпе тасатса кондицине çитерес пулать (стандарт тăрăх, государствăна памалли вăрлăхăн тасалăхĕ 92, шăтаслăхĕ 65 процентран кая пулмалла мар, çумкурăксен шучĕ пĕр килограммра 5 пинтен иртмелле мар, çакăн хыççăн вара государствăна памалла. Вĕсене кăçал Госсортфондăн склачĕсенче çеç пухаççĕ.

Вăхăтра пухса, çапса, тасатса, государствăна кăçал çителĕклĕ те пахалăхлă вăрă парар.

А. КОЛЬЦОВ.
Госсортфонд агрономĕ.

Çăл патĕнче

Хĕвел чăтма çук вăйлă хĕртнĕ, вăл пĕчĕк чугунçул станцийĕ çинче пĕр хускалмасăр çакăнса тăнă пек курăнать. [illegible]

[illegible]

Пĕчĕк ачасене чура тума илсе каяççĕ

Пĕр гвардейски авиачаçăн техникĕ хăйĕн ывăлĕнчен, нимĕçсем вăхăтлăха йышăннă Украинăра юлнăскерĕнчен, çыру илнĕ. Çав çыру чаçри пур гвардеецсем хушшинче те сарăлнă. Техникăн хуйхине унăн боевой юлташĕсем пурте валеçсе тÿсеççĕ. Акă мĕн çырса янă ашшĕ патне унăн пĕчĕк Игорĕ:

«Атте, манăн юратнă тăван аттем, ăçта эсĕ, манăн хаклă аттем? Çак манăн çырăвăм санăн пата пурпĕрех çитессе эпĕ хытă шанса тăратăп. Эсĕ ăна алла илсе вуласа пăхатăнах. Енер эпĕ вунвиç çул тултарса вунтăватта кайрăм. Эпĕ çуралнă куна çынсем пек савăнса паллă тума пулмарĕ. Вăл кун мана темĕн пек йывăр хуйхă пырса çапрĕ. Çав кун пирĕн аннене вĕлерчĕç. Ăна хамăр çăл патĕнчех вĕлерчĕç. Вăл шыв ăсса тăнă чухне пĕр ÿсĕр нимĕç салтакĕ ăна кĕперен ярса илчĕ те çавăнтах вĕлерсе пăрахрĕ. Вăл çĕре йăваланса ÿксен, çав салтак çĕр çине выртрĕ те шыв тултарса лартнă витресем çине винтовкăран пеме пуçларĕ. Пуля шăтарса тухнă витресенчен шыв пĕрхĕнме пуçларĕ, çав салтак çакна курса ахăлтатма тытăнчĕ.

Манăн юратнă хаклă аттем, эсĕ мана çав ирсĕр нимĕçе вĕлерме пултарайманшăн ан ятла. Эпĕ ăна пуçĕнчен пуртăпа çапса яма хатĕрленсе çитнĕччĕ, мана ярса илчĕç те вĕлересшĕн пулчĕç. Вара паян манпа тантăш пур ачасене те, хĕрне-арçынне пăхмасăрах, çапла пĕлтерчĕç: сире пурне те Норвегие пулăран кансервăсем тăвакан фабрикăсенче ĕçлеме илсе каятпăр, терĕç. Халĕ пире тĕрмере тытаççĕ. Манпа пĕрле Ваня, Володька, Гришка. Эсĕ вĕсене пĕлетĕн. Пирĕн яла çунтарса ячĕç.

Атте, Норвегирен эпĕ пурпĕрех таратăп, сана шыраса тупатăпах. Эпĕ халĕ пысăк çынах ĕнтĕ, пурне те ăнланса илетĕп, хамăрăн юратнă аннене эпир чĕртсе тăратма пултараяс çук, анчах та уншăн эпир нимĕçсене тавăратпăрах. Çак çырăва сана Киреев мучи парĕ. Эпĕ хитрех çыраймарăм, хăшпĕр самăхĕсене вуласа тухма та пулаймĕ, анчах эпĕ питĕ васкаса çыратăп, хурал тăракан нимĕç ман çывăхран аяккалла пăраннă чухне çыратăп. Санăн ывăлу Игорь».

Çак çырăва илнĕ хыççăн пĕр уйăх иртсен, гвардеецсем хаçатсем çинче çакăн пек хыпар вуланă: Лондонра пурăнакан норвежецсем илнĕ сведенисем тăрăх, вăхăтлăха оккупациленĕ совет районĕсенчен ирĕксĕрлесе Норвегие илсе килнĕ çамрăк ачасене (8 çултан пуçласа 17 тултарайманнисене) нимĕçсем Буд хулинче (Норвегия) пулăран консервăсем тăвакан фабрикăра чăтма çук йывăр ĕçре тытаççĕ. Çав пĕчĕк ачасене оккупациленĕ совет ялĕсенче заложнике илнĕ те Норвегие яриччен темиçе уйăх хушши тĕрмере тытнă.

Летчик, техник, моторист! Чуралăха илсе кайнă 13 çулти Игорь çырăвне вуласа тух та, нимĕçсене уншăн та тавăр тата Норвегие чура ĕçне тума илсе [illegible]

(«Сталински сокол» хаçатран).

Ют çĕршывсенче

Европăра иккĕмĕш фронт уçассишĕн Англире пулса иртекен митингсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Августăн 30-мĕшĕнче Лондонра тата Лондон районĕнче 80 çĕрте тĕрлĕ митингсем пулса иртнĕ. Вĕсенче 30 пин çын ытла пулнă. Митингсене пухнă çынсем иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтнă. Манчестера демонстраци пулса иртнĕ. Демонстраци 6 пин рабочи пулнă. Демонстраци хыççăн пулса иртнĕ митинг тухса калакан ораторсем пурте иккĕмĕш фронта уçма çине тăрса сăмах каланă. Çав ыйтăва лартса митинг резолюци йышăннă.

Çавăн пекех митингсем Глостерта, Лутонра та (Ведфордшир графстви) пулса иртнĕ.

Англи авиацийĕ Карлсруэ çине вĕçсе пырса тапăннă

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Англи авиаци министерствин коммюникине тăрăх, сентябрĕн 3-мĕшĕнче çĕрле Англи авиацин 100 ытла бомбардировщикĕсем пысăк вăйĕсем Тури Рейн облаçне атакăланă. Тапăнусен тĕп объекчĕ Карлсруэ хули пулнă. Унта вăйлă пушарсем тухнине палăртнă.

Карлсруэ Германин питех те пахă чугунçул центрĕ пулса тăрать. Кунта çĕршывăн çурçĕрпе кăнтăрне тата хĕвеланăçĕпе хĕвелтухăçне çыхăнтаракан сулсем каçаççĕ. Кăнтăралла кайсан Мюнхена тата Кăнтăр Германе таварсене çулталăк çаврăнăшĕ пысăк вăйпа Рейн облаçĕпе Руртан Италие хĕрĕшсе турттармалли питех те паха çул пулса тăрать. Хĕвеланăçелле кайсан çыхăнтаракан Франции транспорт системине çыхăнса тăрать. Карлсруэ çавăн пекех тата каналсен системин центрĕ пулса тăрать, унта пысăк доксем вырнаçнă. Хулара çар предприятийĕсем чылай.

Канада войскисем Англине пырса çитнĕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Англи информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин порчĕсенчен пĕрине Канада войскисен çĕнĕ йышĕсем пырса çитнĕ. Вĕсен шутĕнче бронетанковăй часть, авиагруппа, пулăшакан чаçсемпе санитари отрячĕсем пур.

ПĔТĔМĔШЛĔ МОБИЛИЗАЦИ БРАЗИЛИРЕ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Бразилин президенчĕ декрет кăларнă. Çав декретра нацилле хăрушсăрлăха хирĕç тунă преступленисене пăхса тухма çар трибуналĕсем тăвассине палăртнă. Декрет тăрăх пĕтĕмĕшлĕ мобилизацие халех пуçламалла.

Германири лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Берлинран килнĕ çынсем çапла каласа параççĕ: вăрçăллă çĕнĕ хĕлĕн тĕксĕм малашлăхне кура тата продовольстви тĕлĕшĕнчи лару-тăру начарланса пынă пирки, Германи халăхĕн шухăш-кăмăлĕ питех те пусăрăнчăк. Германи çарĕ çĕнĕ территорисем тытса илни халăха савăнтармасть. Нумайĕшĕсем Германи çарне «çыпçăнса лармалли япала сĕрнĕ хутăн татах та тепĕр квадратлă дюймне тытса илнĕ шăнапа танлаштарма пулать» теççĕ. Продовольстви çитменни çивĕчреххĕн те çивĕчрехĕн палăрса пырать. Çăкăрпа çусен нормине татах чакарнă. Выльăх апачĕ çитмен пирки выльăх-чĕрлĕхсене массăллăн пусаççĕ. Берлин патĕнче сыхланса тăнă тĕштырăн кивĕ запасĕсем пĕтнĕ.

ИНДИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçатăн корреспонденчĕ Делирен çапла пĕлтерет: Индире юлашки вăхăтра пулса иртнĕ хумханусене пула правительствăн пурлăхĕсене пысăк сиен кÿнĕ. Тăкаксем темиçе миллион кĕрепенке стерлинг шутланаççĕ.

Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Индин тĕрлĕ пайĕсенче законсăр пухусемпе демонстрацисем малалла пулса пыраççĕ, полиципе демонстрантсем хушшинче тытăçусем пулса иртеççĕ, çар материалĕсем туса кăларакан промышленность предприятийĕсенче ĕç чарăна-чарăна ларать, саботажсем пулса пыраççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Делире саботаж тума чĕнекен листовкăсем сарăлаççĕ.

Финлянди халăхĕ выçă аптăрать

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Лондонран пĕлтернĕ тăрăх, Финляндири экономикăллă йывăрлăхсем ытларах та ытларах çивĕчленсе пыраççĕ. Çĕршыва вăрçа туртса кĕртнĕ Маннергейм ушкăнĕн преступленийĕсемшĕн Финлянди халăхĕн тÿсме лекет. Продовольстви тĕлĕшĕнчи лару-тăру Финляндире йывăрлансах пырать. Халăха качар çăнăхран пĕçернĕ çăкăр талăкна пилĕкшер чĕлĕ параççĕ. Тырпулсем Финляндире кăçал питĕ начар пулнă. Çĕрулми пачах та тупма çук. Сахăр запасĕсене расходласа пĕтернĕ.

Топливо тĕлĕшпе те Финляндире лару-тăру çакăн пекех йывăр. Финсен пĕр хаçачĕ çырнă тăрăх, «Финляндия çитес хĕлле шăнса вилме пултарать».

ВЕНГРИ ПРАВИТЕЛĔСЕМ «ШАЛТИ ФРОНТ» ПУЛСА ТĂРАССИНЧЕН ШИКЛЕНЕÇÇĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Венгрин «Реггели мадьярсаг» хаçачĕ статья пичетлесе кăларнă. Унта Венгрие тытса тăракан ушкăнсем çĕршывра тарăху ÿссе пынинчен шикленнине уççăнах кăтартса панă. Хаçат çакна йышăнать: «Вăрçă çапăçу хирĕнче кăна мар, шалти фронтра та пырать» тата çĕршывра пур çĕрте те, уйрăмах черетсенче, правительствăпа тата Германие хирĕç туса пыракан «пăшалти пропаганда» хыттăн сарăлать, халăх ăна çывăххăн йышăнать.

«Çав пропаганда мĕн чухлĕ ытларах вăйланать,—тесе çырать хаçат,—тылпа фронт хушшинчи çыхăну çавăн чухлĕ ытларах вăйсăрланать, çапла вара пирĕн хăватлă çар пур пулсассăн та, шалти вăй 1918 çулти пекех хавшаса кайма пултарать».

АНГЛИН ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ÇАР ÇЫННИСЕНЕ НИМĔÇСЕМ САНЧĂРЛАСА ЛАРТАÇÇĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Берлинран илнĕ хыпарсене кăтартса парса, Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин Дьеппра тыткăна илнĕ офицерĕсемпе салтакĕсене, Германин верховнăй командованийĕн приказĕ тăрăх, сентябрĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа сăнчăрсемпе сăнчăрласа лартаççĕ.

ТОГОНА ВЫРĂНА ЛАРТНИ

ТОКИО, сентябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Тогона пэрсен палатин (Япони парламенчĕн çÿлти палатин) членĕ пулма уйăрса лартни çинчен императорăн указне пичетлесе кăларнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чувашконтора «Техжирпром» принимает от государственных, общественных организаций и населения животные, топленные утильные и растительные жиры с возвратом им хозяйственного мыла — за 600 граммов жира 1 кг. мыла.
Обращаться: г. Чебоксары, Канашская, 17. Техжирпром.

УШЛА КОБЫЛИЦА
вороной масти, 6 лет. Знающих просим сообщить по адресу: г. Чебоксары, Канашская, 27, эвакогоспиталь № 3057.

На постоянную работу в Чебоксарах требуются: электромонтеры, слесаря, машинисты, сливо-наливщики, приемо-сдатчики, завхоз — зав. материальным складом, дорожный мастер, шофера, охранники, зав. столовой, повар, буфетчица, инспектор по кадрам, секретарь-машинистка, бухгалтера, табельщик, уборщицы и другие рабочие.
Обращаться по адресу: Об'ект, почтовый ящик 14, деревня Аникеево.
3—1.

Требуется на постоянную работу бухгалтер-ревизор. Обращаться: ул. Урицкого, 36, Чувашлеспродторг.

Филиал Горьковского Электромеханического техникума НКЭП продолжает прием заявлений.
Техникум без отрыва от производства готовит техников-технологов по холодной обработке металлов резанием и давлением и техников-электриков по аппаратостроению.
Срок обучения 4 года.
В техникум принимаются лица без ограничения возраста, имеющие образование в объеме 7 классов средней школы.
Заявления о зачислении в техникум подаются на имя заведующего филиалом с приложением: автобиографии, свидетельства о рождении, справки лечебного учреждения о состоянии здоровья, справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных), трех фотокарточек.
Вместо свидетельства о рождении, граждане, достигшие 16-летнего возраста, предъявляют паспорт при личной явке.
Лица, окончившие 9 и 10 классов средней школы, принимаются без приемных экзаменов на 2-й курс.
Производится прием заявлений на 3-й курс от лиц, имеющих соответствующие знания.
Оплата за обучение в техникуме 75 руб. в год.
Заявления принимаются ежедневно от 12 час. до 19 час. в помещении бюро пропусков завода (ул. К. Маркса, 60).
3—2. ЗАВ. ФИЛИАЛОМ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 8, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропаганда парти пурнăç пайĕн — 3—92, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11518 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. [illegible]